# Паян районта – Тыр-пул уявĕ


# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

87-88 (7512-7513) №№ ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи октябрĕн (юпа) 20-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Ял çынни йывăрлăхсенчен хăрамасть

### Ю.А. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ

Ял хуçалăхĕ пирĕн район экономикин тĕп никĕсĕ пулса тăрать. Агропромышленноç комплексĕнче хастар та маттур, çĕр ĕçне чунтан парăннă тата юратакан çĕршер çын вăй хуни района тивеçлĕ шайрах тытăнса тăма май парать.

Хăйсен професси уявне ял хуçалăх ĕçченĕсем кăçал та япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илчĕç. Пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене пĕтĕмпе 20 пин тонна пухса кĕртнĕ, кашни гектартан вăтамран бункер виçипе 18 центнера яхăн тухăç илчĕç.

Паянхи наука çитĕнĕвĕсемпе усă куракан, агротехника ыйтăвĕсене пăхăнса ĕçлекен, пысăк репродукциллĕ çĕнĕ сортсемпе усă куракан хуçалăхсем çанталăкăн кирек епле условийĕсенче те пысăк тухăç илме пултарнине кăçал та куртăмăр.

Ильич яч. хис. хуçалăхра (хуçалăх ертӳçи Игорь Васильевич Николаев, тĕп агрономĕ Федор Аверкиевич Егоров) кĕрхи тулăн "московская-39" сортне кашни гектартан 52 центнер илме пултарчĕç. Çавăн пекех "Ударник" сăнавлă производство хуçалăхра (хуçалăх ертӳçи Платон Павлович Давыдов, тĕп агрономĕ Иван Алексеевич Никитин) кĕрхи тулăн "казанская-560" сортне кашни гектартан 48 центнер пухса кĕртрĕç.

Пысăк репродукциллĕ сортсем пысăк тухăç пани кăçалхи условисенче уйрăмах палăрчĕ. Сăмахран, "Восток" хуçалăхра (хуçалăх ертӳçи Михаил Николаевич Шишокин) "московская-39" сортлă кĕрхи тулă кашни гектартан 34 центнер, "Герой" хуçалăхра (хуçалăх ертӳçи Ростислав Николаевич Тимофеев, тĕп агрономĕ Зоя Яковлевна Макарова) "пирамида" сортлă çурхи тулă кашни гектартан 34 центнер тухăç пачĕ.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, тыр пул пухса кĕртес ĕç комбайнерсем çине тиенет. Хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлассипе кăçалхи вырмара уйрăмах лайăх ĕçленĕ комбайнерсене палăртса хăварма кăмăллă. Акă вĕсем: Бархаткин фермер хуçалăхри Николай Павлов (1360 тонна), "Свобода" хуçалăхри Валерий Соловьев (1005 т.), Чкалов яч. хис. хуçалăхри Варсанофий Леонидов (453 т.).

Комбайнсем патĕнчен тырă турттаракансене те ырă ятпа асăнса хăварасшăн. "Ударник" хуçалăхри Иван Степанов (68367 т. км.), "Оринино" хуçалăхри Иван Ершов (61760 т. км.), Ильич яч. хис. хуçалăхри Леонид Семенов (41200 т. км.) тăрăшса ĕçлерĕç.

Суха-çĕртме ĕçĕсенче чи маттур ĕçлекен трактористсене те тав тăвасшăн. Вĕсем: Ильич яч. хис. хуçалăхри Александр Александров (2080 эт. га.), Чкалов яч.хис. хуçалăхри Болеслав Никитин (1481 эт. га.), "Герой" хуçалăхри Валерий Иванов (1445 эт.га.).

Муркаш районĕ республика шайĕнче çĕр улми туса илессипе яланах палăрса тăнă. Кăçал 900 гектар çинчен "иккĕмĕш çăкăра" 12 пине яхăн тонна пуçтарса илтĕмĕр. Районĕпе вăтам тухăç 135 центнерпа танлашрĕ. Çак культурăна çитĕнтерес тĕлĕшпе уйрăмах ăнăçлă ĕçлекенсенчен пĕри Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх, кашни гектартан 296 центнер, тепри "Ударник" хуçалăх – 153 центнер туса илчĕç.

"Иккĕмĕш çăкăра" вăхăтра тата тирпейлĕ пухса кĕртес ĕçре хуçалăхсене пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен коллективĕсем пысăк пулăшу пачĕç. Çакăншăн вĕсен ертӳçисене, вĕрентекенсемпе вĕренекенсене чун-чĕререн тухакан тав сăмахĕсем кăна калас килет.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

**Ăратлă выльăхпа ĕçлесси – "АПКна аталантарасси" наци проекчĕн тĕп пайĕ**

## Мал туртăмлă ĕçлеме районтах никĕс пур

– Нумай шутлатпăр, калаçатпăр, çав хушăрах пурнăçран юлни пирки çывăха илместпĕр. Çĕннине куллен алла илсе пыракансем вара ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăваççĕ. Вĕсен экономика кăтартăвĕсем те малаллах каяççĕ, – терĕ ăратлă выльăхсен выставкине уçнă май Чăваш Республикин Ял хуçалăх министрĕ М. Игнатьев курав тĕллевĕ хуçалăхсем ăратлă выльăх ĕрчетес енĕпе мĕнле ĕçленине ыттисене кăтартасси, республикăри ял хуçалăх организацийĕсене ăратлă çамрăк выльăх ытларах сутасси, ăратлă выльăхпа ĕçленинчен продукци нумайрах илесси, вырăнта паха апат-çимĕç хатĕрлессине ӳстересси пулнине палăртнă май. Çак сăмахсем выставкăн пĕтĕм ĕçне сăнларĕç, малтуртăмлă ĕçлекенсен пултарулăхне хакларĕç. Министр сăмахĕсенчен çĕнĕ технологисене хальтерех алла илсен пирĕн кашни ĕнерен вăтамран 6 пин килограмм сĕт сума паян пур майсем те çителĕклĕ. Сысна ĕрчетесси тĕнче шайне тухать пулсан, чăх-чĕп отраслĕ пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ тĕнче шайĕнче. Çак сăмахсене илтсен "Свобода" хуçалăхри Кашмашри сысна ферминче 30 çул пĕр улшăнмасăр амасем патĕнче ĕçлекен Юлия Александровна Романова алăри çурана çума пăчăртаса ăшшăн йăл кулчĕ. Хуçалăх ертӳçипе специалистсене те, министр каланине те тав туни палăрчĕ унта. М. Игнатьев выставкăпа иртнĕ чух Л. Капирован качакисемпе интересленнине те кунта килнисем кăмăлласа йышăнчĕç. "Ял хуçалăхне аталантарма пăхнă наци проекчĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене çеç мар, килти хушма хуçалăхсене те тĕкĕ парать. Унпа усă куракансене маттур çеç теес килет", – терĕ качакасем патĕнчен уйрăлнă май министр.



Ял хуçалăх министрĕ М. Игнатьев "Януш" хуçалăх ертӳçипе Л. Капировапа калаçать.



"Свобода" ăратлă выльăх ĕрчетекен заводри Ю.А. Романова ĕç ĕмĕрне сысна амисем патĕнче ирттерчĕ.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).

**Çĕнтерӳçĕсене – наградăсем**

**РАЙОН АДМИНИСТРАЦИЙĔН ПУÇЛĂХĔН ОКТЯБРĔН 19-МĔШĔНЧИ "2007 ÇУЛХИ ВЫРМĂРИ МЕХАНИЗАТОРСЕН ЭКОНОМИКА ĂМĂРТĂВНЕ ПĔТĔМЛЕТНИ ÇИНЧЕН" ЙЫШĂНĂВĔПЕ ÇАКСЕНЕ ÇĔНТЕРӲÇĔ ТЕСЕ ЙЫШĂННĂ ТАТА ВĔСЕНЕ РАЙАДМИНИСТРАЦИ ДИПЛОМĔСЕМПЕ, ХАКЛĂ ПАРНЕСЕМПЕ ЧЫСЛАМА ПĂХНĂ**

**КОМБАЙНЕРСЕМ ХУШШИНЧЕ**

1-мĕш вырăн – Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче ĕçленĕ Николай Васильевич ПАВЛОВ экипажĕ. Тирпейлĕ ĕçе мала хуракансем "Дон-1500" комбайнпа 1360 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Ăна "Вырма – 2007" чи лайăх экипажĕ" лентăпа, 1-мĕш степеньлĕ дипломпа тата 1500 тенкĕлĕх хаклă парнепе наградăлама йышăннă;

2-мĕш вырăн – "Свобода" ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Валерий Александрович СОЛОВЬЕВ экипажĕ. Вĕсене "Дон-1500" комбайнпа 1005 тонна тырă çапса тĕшĕленĕшĕн 2-мĕш степеньлĕ дипломпа тата 1200 тенкĕлĕх хаклă парнепе наградăлама йышăннă;

3-мĕш вырăн – Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче ĕçленĕ Варсанофий Леонидович ЛЕОНИДОВ экипажĕ. Вĕсене "СК-5 "Нива" комбайнпа 453 тонна тырă çапса тĕшĕленĕшĕн 3-мĕш степеньлĕ дипломпа тата 1000 тенкĕлĕх хаклă парнепе наградăлама йышăннă.

**ТРАКТОРИСТСЕМ ХУШШИНЧЕ (9 уйăхпа)**

Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Александр Петрович АЛЕКСАНДРОВА . "ДТ-75" трактора юсавлă ĕçлеттерсе 2080 условнăй эталон-гектар ĕç пурнăçлама пултарнăшăн "2007 çулхи чи лайăх тракторист" лентăпа, 1-мĕш степеньлĕ дипломпа тата 1500 тенкĕлĕх хаклă парнепе чыслама пăхнă;

Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Болеслав Николаевич НИКИТИНА МТЗ-82 тракторпа 1481 условнăй эталон-гектар ĕç пурнăçланăшăн 2-мĕш степеньлĕ дипломпа тата 1200 тенкĕлĕх хаклă парнепе наградăлама йышăннă;

"Герой" ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Валерий Афанасьевич ИВАНОВА "ДТ-75" тракторпа 1445 условнăй эталон-гектар ĕç пурнăçланăшăн 3-мĕш степеньлĕ дипломпа тата 1000 тенкĕлĕх хаклă парнепе наградăлама йышăннă.

**ВОДИТЕЛЬСЕМ ХУШШИНЧЕ (9 уйăхпа)**

"Ударник" сăнавлă производство хуçалăхĕнчи Иван Валерианович СТЕПАНОВА 68367 тонна-километр ĕç тунăшăн "2007 çулхи чи лайăх водитель" лентăпа, 1-мĕш степеньлĕ дипломпа тата 1500 тенкĕлĕх хаклă парнепе наградăлама йышăннă;

"Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Иван Алексеевич ЕРШОВА 61760 тонна-километр ĕç тунăшăн 2-мĕш степеньлĕ дипломпа тата 1200 тенкĕлĕх хаклă парнепе наградăлама йышăннă;

Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Леонид Вячеславович СЕМЕНОВА 41200 тонна-километр тиев турттарнăшăн 3-мĕш степеньлĕ дипломпа тата 1000 тенкĕлĕх хаклă парнепе наградăлама йышăннă.

## Ыран – Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ

**ÇУЛ-ЙĔР ХУÇАЛĂХĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире професси уявĕпе саламлатăп!**

Эсир ырми-канми вăй хуни халăх хуçалăхĕн мĕн пур отраслĕсене эффективлă аталанма, республикăна çĕнетсе улăштарма майсем туса парать. Паянхи автомобиль çулĕсем тата аталаннă транспорт инфраструктури хуласемпе ялсене илĕртӳллĕрех, çынсен пурнăçне меллĕрех тăваççĕ.

Паян Чăваш Енте çул–йĕр тăвасси пахалăхлă çĕнĕ шая çĕкленчĕ. Мĕн пур ялсене хăпартнă çулпа çыхăнтарасси масштаблă истори проекчĕ ăнăçлă пурнăça кĕрсе пырать. Çавна май республикăри экономика пурнăçĕн таппи вăйлăрах тапма пуçлĕ. Хула округĕсен урампа çул–йĕр тытăмне васкавлăн аталантарасси те – пĕлтерĕшлĕ малашлăх задачи. Республикăн тĕп тата ытти хулисенче çĕнĕ çулсем, кĕперсем, транспорт узелĕсем хута кайĕç. Çакă паянхи хуласемшĕн характерлă транспорт проблемисенчен хăтăлма май парĕ.

Чăваш Ен çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсене тăван республикăна аталантарас ĕçри профессионализмшăн, ответлăхшăн, тухăçлă ĕçленĕшĕн тав тăватăп. Сире çирĕп сывлăх, малашнехи ăнăçусем, тулăх пурнăç тата телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

---

**ÇУЛ-ЙĔР ХУÇАЛĂХĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.**

Çул кашни çыннăн пурнăçĕнче мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлине пирĕнтен кашниех лайăх пĕлет. Çул-йĕр ыйтăвĕ пирĕн районта яланах малтан татса памалли ыйтусенчен пĕри пулнă. Мĕншĕн тесен çĕнĕ çулсем хута кайни хăех халăхăн пурнăç условийĕсем лайăхланса пынине яр уççăнах кăтартса парать. Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В.Федоровăн Чăваш Республикин автомобиль çулĕсене хăвăрт вĕçлес енĕпе пурнăçламалли ĕçсем çинчен калакан указĕ вара çак ыйтăва 2 çул хушшинче татса пама май парать. Çак пурнăçпа пĕр килнине районта пурăнакансем ăнланса илчĕç ĕнтĕ. Районти 34 ял патне халиччен йĕркеллĕ çул пулман пулсан, вĕсенчен 24-шĕн патне кăçалах йĕркеллĕ те тикĕс çул пулĕ. Çулталăк пуçланнăранпа вара 8 ял патне çити туса пĕтертĕмĕр ăна. Нумай çĕрте халĕ çул тăвас ĕç малалла пырать. Çитес çул районти пур ял патне çитиех çулсене туса пĕтерме палăртнă.

Çул тăвакансен, юсакансемпе пăхса тăракансен ĕçĕ пархатарлă та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эсир яланах çул такăр та тикĕс, усă пултăр тесе хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Çапла майпа çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăха çирĕплетме те пулăшатăр. Тавах сире ырми-канми ĕçĕршĕн. Эсир малашне те хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçласса шанатăп.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, çăмăл мар ĕçĕрте ăнăçу, пурнăçра телей сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Йыхрав**

## Черетлĕ лару

Депутатсен районти Пухăвĕн ертӳçи черетлĕ 21-мĕш ларăва пухасси çинчен хушу кăларнă. Лару октябрĕн 25-мĕшĕнче 10 сехетре райадминистрацин ларусен залĕнче уçăлать. Кун йĕркине çак ыйтусене кĕртме сĕннĕ:

1.Депутатсен районти Пухăвĕн "ЧР Муркаш район Уставне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен" йышăну проектне халăхпа сӳтсе явма палăртасси çинчен.

2. Депутатсен районти Пухăвĕн "Районăн 2008 çулхи бюджечĕ çинчен" йышăну проектне халăхпа сӳтсе явма палăртасси çинчен.

3. Районăн 2007 çулхи 9 уйăхри экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн итогĕсем çинчен.

4.Районăн 2007 çулхи 9 уйăхри бюджетне пурнăçланин итогĕсем çинчен.

5.Районăн тĕллевлĕ "Район культури: 2006 – 2010 çулсем" программине пурнăçлани çинчен.

6. " Районта РФ тата ЧР саккунĕсемпе налук тытас ыйтусене вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çине хурасси çинчен калакан положение" çирĕплетесси çинчен.

7."Районти бюджетăн право хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен положение" çирĕплетесси çинчен.

8. Депутатсен районти Пухăвĕн 2006 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчи С-15-2 № "Районăн 2007 çулхи бюджечĕ çинчен" йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

Ларăва ял тăрăхĕн пуçлăхĕсене, предприятисемпе организацисен ертӳçисене, райадминистрацин управленийĕсемпе пайĕсен пуçлăхĕсене чĕнеççĕ.

## Район хаçатне малалла çырăнтараççĕ

**Хаклă вулакансем! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2008 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Çитес çул та пĕрле пулар.**

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**